


NIX НИ
КОМПЬЮ
СУПЕРМ

ПОДАРОК - ПРИ ПОКУПКЕ КОМПЬЮТЕРА

п. Ибреси, ул. Садовая, д. 7 /Дом быта/, 2 этаж, телефон: 2-22-62.
КРЕДИТ
www.nix.ru



Йĕпреҫ районĕн хаҫачĕ

# ҪĔНТЕРӲШĔН

Шăматкун
2007 ҫурла, 18

66 /8983/№

Хаҫат 1932 ҫултанпа тухса тăрать

Хакĕ ирĕклĕ



электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru


РЕСПУБЛИКА ХЫПАРĔСЕМ

## ХУЛА КУННЕ ХАЛАЛЛАНĂ КУРАВ

Иртнĕ кунсенче республикăн тĕп хулинчи хальхи искусство центрĕнче «Савнă Шупашкар» курав уҫăлнă. Унта 35 авторăн икҫĕре яхăн ĕҫне тăратнă. Курав йĕркелӳҫисем тăрăшуллă пулнă, вĕсем кĕске хушăрах (экспозицие икĕ кунрах хатĕрленĕ) Шупашкар хулин кунне халалласа иртterекен тематика куравне сăнарлă искусствăн паллă ăстисене явăҫтарма пултарнă. Вĕсен хушшинче пирĕн ентешсем – Валентин Федоров, Владислав Зотиков, Николай Федоров пур. Тĕп хула ҫыннисемпе хăнисем хальхи тĕрĕ-эреше те, хӳхĕм скульптурăсене те, этника мелĕпе тунă коллажсене те, паллă ҫынсене сăнарланă портретсене те, декорацисен эскизĕсене те, сатира ӳкерчĕкĕсене те курса хак параҫҫĕ.

***В. ВАСИЛЬЕВ.***

### РАЙОНĂН ҪĔНĔ АРХИТЕКТОР

Район пуҫлăхĕн хушăвĕпе килĕшӳллĕн районăн архитекторĕн ĕҫĕсене пурнăҫлама **Маргарита Даниловна АНДРЕЕВАНА** ҫирĕплетнĕ.

## МАЛАРАХ ҪЫРĂННИ ПЕРЕКЕТЛĔРЕХ

**ХИСЕПЛĔ ВУЛАКАНСЕМ!**

**Район хаҫачĕн редакцийĕ сире ҫакна пĕлтерме васкать: «Ҫĕнтерӳшĕн» хаҫата 2008 ҫулхи пĕрремĕш ҫур ҫулта илсе тăма ҫурла (август) уйăхĕн 31-мĕшĕччен хальхи хаксемпех ҫырăнтараҫҫĕ. Аса илтеретпĕр:**

**ҪЫХĂНУ УЙРĂМĔСЕНЧЕ – 152 тенкĕ те 46 пуспа;**

**«ЧĂВАШПИЧЕТ» УАО киоскĕнче – 120 тенкĕпе;**

**ХАҪАТ РЕДАКЦИЙĔНЧЕ (альтернативлă майпа) – 105 тенкĕпе.**

**Хаклă тусăмăрсем! Район хыпарҫине ҫырăнмасăр ан юлăр. Вăл сире ҫĕршыв, республика, район хыпарĕсене чи малтан пĕлтерĕ. Маларах ҫырăнни вара ҫемье бюджетне перекетлет.**

## *ПОЗДРАВЛЯЕМ*

горячо любимую маму, тещу, бабушку, сваху – **ЕРШОВУ Таисию Георгиевну,** проживающую в деревне Вудояла, с незабываемым событием в ее жизни – 50-летием со дня рождения. Желаем крепкого здоровья, счастья, радости, бодрости и жить долго-долго без старости.

Вас с юбилеем поздравляем,
Душой желаем не стареть.
Прошедших лет не замечая,
Желаем только молодеть.
Не важно ведь, сколько исполнилось лет,
Важно, чтоб в жизни остался Ваш след.

***ДОЧЬ, ЗЯТЬ, ВНУЧКА, СВАТ И СВАХА.***

**х х х**



Дорогую, милую маму, свекровь, тещу, бабушку – **Зою Юрьевну МИХАЙЛОВУ**, проживающую в п. Ибреси, – от всей души, горячо и сердечно поздравляем с замечательным днем в ее жизни – 50-летием!

За ласку, доброту, заботу
Хотим тебя благодарить.
Собрать бы все цветы на свете
Тебе, родная, подарить.
И пожелать здоровья, счастья,
Побольше радости, добра.
Чтоб в жизни не было ненастья
И чтоб не старили года.

***3 СЫНА, ДОЧЬ, 2 СНОХИ, ЗЯТЬ, 2 ВНУЧКИ.***



## РАМИЛЬ ХАЙБУЛЛИН – ĔҪЛЕКЕН ҪАМРĂКСЕН ЧИ ЛАЙĂХ НАСТАВНИКĔ

*(Ун ҫинчен ҫырнă материалпа 2-мĕш страницăра паллашăр).*

***С. БЫКОВА сăнӳкерчĕкĕ.***

### ПОЗДРАВЛЯЕМ

дорогую, любимую, милую, добрую маму, заботливую и внимательную бабушку **ПЕТРОВУ Раису Ивановну,** проживающую в п. Ибреси, с замечательным юбилеем! Желаем здоровья, счастья, долгих лет жизни.

Сегодня и всегда
Тебе желаем счастья!
Храни тебя судьба
От мрака и несчастья.
От души тебя
мы любим
И за все
благодарим.
С юбилеем!

***ДЕТИ, ВНУКИ, РОДНЫЕ И ПОДРУГИ.***

### ОТДЕЛ МИНФИНА ПО ИБРЕСИНСКОМУ РАЙОНУ

объявляет конкурс на замещение вакантной должности государственной гражданской службы Чувашской Республики старшего специалиста 1 разряда – программиста. Требования, предъявляемые к претенденту: образование не ниже среднего профессионального, соответствующего направлению деятельности. За дополнительной информацией обращаться по тел.: 2-12-35, 2-17-34, 2-10-40, факс: 2-10-40.

### МЕХАНИЗАТОРЫ НА ПОДЪЕМЕ ЗЯБИ /на 15.08.07 г., в гектарах/

| Ф. И. О. механизатора | Хозяйства | Марка тра |
|---|---|---|
| Иванов А. И. | «Красный партизан» | Т-150 |
| Егоров П. А. | им. Калинина | ВТ-150 |
| Петров Н. В. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-892 |
| Гордеев С. Н. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-892 |
| Никифоров А. В. | «Патман» | МТЗ-82 |
| Степанов В. М. | ЗАО АФ «Ибресинская» | МТЗ-892 |
| Гаврилов А. Н. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Раков С. А. | «Заря» | МТЗ-82 |
| Иванов В. В. | «Патман» | Т-150 |
| Руссков В. М. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Иванов В. Н. | ОАО «Рассвет» | ДТ-75 |
| Васильев М. К. | ОАО «Рассвет» | Т-150 |
| Тихонов А. Н. | «Искра» | МТЗ-1221 |
| Одинцов Н. Л. | им. Ильича | ДТ-75 |
| Одинцов С. В. | им. Ильича | ДТ0175 |
| Иванов С. Н. | ОАО «Рассвет» | ДТ-75 |
| Константинов А. В. | им. Калинина | МТЗ-82 |
| Сорокин Д. Н. | «Искра» | Т-150 |
| Егоров Ю. А. | им. Калинина | ДТ-75 |
| Абдюшев Г. А. | им. Калинина | ДТ-75 |
| Никитин В. А. | «Патман» | МТЗ-82 |
| Федоров В. Ф. | «Красный фронтовик» | ДТ-175 |

### КОМБАЙНЕРЫ НА УБОРКЕ УРОЖАЯ /на 15.08.07г., в тоннах/

| Ф. И. О. комбайнера | Хозяйства | Марка ко |
|---|---|---|
| Шаршевич В. Ф. | ОАО «Рассвет» | Дон-1500 |
| Белов В. Р. | «Красный фронтовик» | Енисей |
| Никитин А. Н. | «Патман» | Енисей |
| Шибаев Ф. М. | «Красный партизан» | Дон-1500 |
| Васильев В. Н. | «Красный партизан» | Дон-1500 |
| Чандров И. И. | им. Калинина | Енисей |
| Гордеев В. И. | им. Ильича | Дон-1500 |
| Ярзунов Н. Р. | ЗАО АФ «Ибресинская» | СК-5 Нив |
| Сюдамов С. А. | им. Ильича | СК-5 Нив |
| Григорьев В. Н. | ОАО «Рассвет» | Дон-1500 |
| Карпов В. Е. | «Искра» | СК-5 Нив |
| Тихонов А. Н. | «Искра» | СК-5 Нив |
| Петров А. В. | им. Калинина | СК-5 Нив |
| Анисимов О. Д. | им. Ильича | СК-5 Нив |
| Салмин В. И. | «Заря» | СК-5 Нив |
| Романов Н. Н. | им. Калинина | СК-5 Нив |

## ҪУЛ-ЙĔР ĂСТИСЕН ПАРНИ

Тахҫантанпах кĕтнĕ кун ҫитрĕ-ҫитрех. Нумаях пулмасть патшалăх комиссийĕ Кĕлĕмкасси ял тăрăхĕн тĕп ялĕнчен Мереҫене каякан автоҫула йышăннă. Николай Козлов мастер тата Николай Аркадьев прораб ертсе пынипе ҫул-йĕр управленийĕн строителĕсем ку ҫула вăхăтпа пăхнинчен маларах тата лайăх пахалăхпа ĕҫе кĕртнĕ. 3,042 ҫухрăм тăршшĕ тăсăлакан ҫул ҫинчи вак чула икĕ хутчен битум сарса тикĕсленĕ.

Хальхи вăхăтра Николай Козлов мастер ертсе пыракан участок Хурамал ялĕнчи вăтам шкула пыракан автоҫул ҫинче ĕҫлет. Ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулĕ пуҫланиччен асăннă объекта хута яма пур майсем те ҫитеҫҫĕ.

***В. ВАСИЛЬЕВ.***

**Çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче Чăваш Ен Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Сергей Гапликов республика Правительствин ларăвне ирттернĕ.**

# ТĔП ВЫРĂНТА – ПУРНĂÇ ПАХАЛĂХĔ

Унăн кун йĕркинче республикăри çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатассипе çыхăннă ыйтусем тĕп вырăнта пулнă. Министрсен Кабинечĕ «Чăваш Республикинчи ĕç ветеранĕсемпе вăрçă çулĕсенчи тыл ĕçченĕсене тата ĕç ветеранĕсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен» Чăваш Республикин саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккун проектне ырланă. Паллă ĕнтĕ, 2007-2008 çулсенче Чăваш Енре вырăнти телефон çыхăнăвĕпе усă курнăшăн тӳлемелли çĕнĕ тытăм ĕçе кĕрет. Саккун проекчĕпе телефонпа усă курнăшăн илекен абонент тӳлевĕн 50 процентне памалли укçан компенсацийĕ, çавăн пекех суйласа илнĕ тариф планне пăхмасăрах абонент тӳлевĕн тариф планĕпе усă курмалли хак та сыхланса юлать. Радиопа тата пĕрлехи телеантеннăпа усă курнăшăн та компенсацин çав виçинех сыхласа хăварма сĕннĕ.

«Чăваш Республикинчи патшалăх учрежденийĕсенче ĕçлекенсене ĕçшĕн тӳлессине йĕркене кĕртесси çинчен» Чăваш Республикин Саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккун проекчĕ медицина работникĕсене ĕçшĕн тӳлемелли çĕнĕ йĕркене çул парасшăн. Çирĕплетнĕ окладсене тата вĕсен коэффициенчĕсене, çавăн пекех тӳлевсене пысăклатмалли майсене, пысăклатмалли коэффициентсене, ĕç кăткăслăхĕн шайне, çыннăн квалификацине, сывлăх сыхлавĕн учрежденине е унăн подразделенине ертсе пынăшăн паракан тӳлеве тата уйрăмах йывăр условисенчи ĕçсене кура ӳстереççĕ. Ĕç укçине пысăклатмалли майсен шутне – сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсенче пĕр улшăнмасăр ĕçленин коэффициентне, ученăй степенне кĕртеççĕ, ĕçре юлашкинчен пулакан кăтартусене тата медицина пулăшăвĕн пахалăхне палăртса медицина ĕçченĕсене хавхалантармалли тӳлевсем параççĕ.

Ĕçшĕн тӳлемелли çĕнĕ тытăма пирĕн республикăри сывлăх сыхлавĕн патшалăх учрежденийĕсенче (вĕсем, паллă ĕнтĕ, сывлăх сыхлавĕн тытăмĕнчи пулăшусене лайăхлатма май паракан пилотлă проекта пурнăçлама хутшăнаççĕ) кăçалхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче ĕçе кĕртме пăхнă. Çакăн хыççăн медиксен вăтам ĕç укçи 2006 çулхи шайринчен 20 процент, 2008-2009 çулсенче вара икĕ хут ӳсмелле.

Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви Чăваш Республикинчи вĕрентӳ учрежденийĕсенче 2007-2010 çулсенчи тапхăрта вĕренекенсене апатланатарассине лайăхлатма пулăшакан мерăсен комплексне сĕннĕ. Çав документа пурнăçа кĕртни тĕрлĕ организацисене шкул ачисен апатланăвне тивĕçтерессипе, çав ĕçĕн пахалăхне, экологипе санитари хăрушсăрлăхне тĕрĕслесе тăрассине вăйлатма, апатлану предприятийĕсен пурлăхпа техника никĕсне тĕреклетме май парĕ. Правительствăн çак йышăнăвĕнче вĕренекенсен сывă апатлану культурине йĕркелесси çине пысăк тимлĕх хунă.

Правительство «Чăваш Республикинчи социаллă пĕлтерĕшлĕ чир-чĕрсенчен асăрханасси тата вĕсене хирĕç кĕрешесси» (2008-2011 ç.ç.) республикăра туса хатĕрленĕ тĕллевлĕ программа проектне ырланă. Ку документра ĕç-хĕлĕн тĕп çул-йĕрĕсене – «Сахăр диабечĕ», «Туберкулез», «ВИЧ-инфекци», «Онкологи», «Арлăх çулĕпе сарăлакан инфекцисем», «Вирус гепатичĕсем», «Психика чирĕсем», «Юн пусăмĕн гипертонийĕ», «Вакцинопрофилактика», «Юн тымарĕн чирĕсем» çумпрограммăсене палăртнă. Хăрушă чирсемпе кĕрешме тата профилактика ĕçĕсем ирттерме тĕрлĕ çăлкуçсенчен 1 миллиард та 319 миллион тенкĕ укçа куçараççĕ. «Программăра тĕллевлĕ ĕçсене пурнăçламалли мероприятисем палăртнин экономикăпа социаллă пĕлтерĕшĕ пысăк, çакă пирĕн республикăра çав чир-чĕрсем сахалтарах сарăлассине палăртакан шанăç çуратать», – тенĕ Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Сергей Гапликов.

Республика Правительствин ларăвĕнче çавăн пекех Етĕрне районĕн территорийĕнче «Ачак» этнопарк тăвасси çинчен йышăну тунă, республикăри пурлăха 2008 çулта приватизацилемелли прогноз планне (программине) тата республикăри пурлăха 2008-2010 çулсенче приватизацилемелли тĕп çул-йĕрсене сӳтсе явнă, ытти çивĕч ыйтусене пăхса тухнă.

***Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕн пресс-службы.***

# НУЖНА ПОДДЕРЖКА НА БЛАГОРОДНОЕ ДЕЛО

Министерством здравоохранения и социального развития ЧР принято решение о выделении Ибресинскому району врача специалиста-патологоанатома и финансовых средств на специализированное оборудование для открытия в Ибресинском районе патологоанатомического отделения. В настоящее время жители Ибресинского района вынуждены производить вскрытие трупов в Вурнарской ЦРБ в количестве более 400 человек в год, что доставляет большие неудобства и затраты предприятиям и населению района. В связи со сложившейся ситуацией и недостатком бюджетных средств, Советом работодателей Ибресинского района от 18 июня 2007 года принято решение по открытию целевого счета для сбора финансовых средств на ремонт морга Ибресинской ЦРБ и перечислению в размере однодневного заработка с каждого работника предприятий, организаций, учреждений всех форм собственности, но не менее 150 рублей на каждого работника; предприятия, работающие по исполнению муниципальных заказов, не менее – 200 рублей на каждого работника; индивидуальные предприниматели – не менее 500 рублей.

Сметная стоимость проведения ремонта бывшего здания патологоанатомического отделения составляет более 500 тыс. рублей.

В настоящее время ремонтно-строительные работы начаты предприятием ЗАО МСО «Ибресинская».

**РЕКВИЗИТЫ ДЛЯ ПЕРЕЧИСЛЕНИЯ:**
**р/с 40702810675120000123**
**Банк получателя:**
**Чувашское ОСБ №8613 г. Чебоксар**
**БИК 049706609**
**к/с 30101810300000000609**
**Получатель: ЗАО МСО «Ибресинская»**
**Канашское ОСБ №7507 г. Канаш**
**ИНН 2105000308**
**КПП 210501001**
**ОКАТО 97213000001**

Контроль за использованием денежных средств, поступивших на расчетный счет ЗАО МСО «Ибресинская», будет осуществляться рабочей группой, созданной Советом работодателей.

Надеемся на взаимопонимание и финансовую поддержку благородного дела.

**А. КУЗЬМИН,**
**председатель совета работодателей района,**
**О. ТИМУКОВА,**
**секретарь совета работодателей района.**

x x x

За последние 10 дней счет благотворительной акции пополнился до 213447 рублей. Перечислили свои пожертвования:

ООО «Ибресиагрострой» – 3600 руб., ООО «Центр правовых и бухгалтерских услуг» – 450 руб., Ибресинское райпо – 26000 руб., отдел социальной защиты населения – 1020 руб., Исаева Т. А. – 500 руб., Шапошникова О. А. – 500 руб., ООО «Бриз» – 1000 руб., Центр занятости – 3050 руб., Варганова Т. В. – 8800 руб., Федоров С. А., магазин «Импульс» – 500 руб., ООО «Домашняя мебель» – 1800 руб., ООО «Мебель» – 10050 руб., Яковлева С. В. – 500 руб., Школьников С. Г. – 500 руб., Серлин В. В. – 500 руб., Александров А. В. – 8156 руб., Шапошников О. М. – 500 руб., МУЗ «Ибресинская ЦРБ» – 27500 руб.

Сборы средств продолжаются.

# ПУЛТАРУЛЛĂ НАСТАВНИК


Министерство образования и молодежной политики Чувашской Республики

СВИДЕТЕЛЬСТВО

выдано

Хайбуллину Рамилу Киямединовичу

финалисту республиканского конкурса «Лучший наставник работающей молодежи»

индивидуальному предпринимателю

Министр Г.П. Чернова

г. Чебоксары, 2007

Çак кунсенче республика шайĕнче иртнĕ «Ĕçлекен çамрăксен чи лайăх наставникĕ-2007» конкурса пĕтĕмлетнĕ. Кунашкал конкурса Чăваш Енре пуçласа ирттернĕ, унта 60а яхăн çамрăк хутшăннă. Участниксене Чăваш Республикин вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Галина Петровна Чернова саламланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче предприятисенче ĕçлекен çамрăксене ĕç опытне илме пулăшакансен пуçарулăхне ырламаллине, вĕсене çул памаллине палăртнă. Аста специалистсем çамрăксене хăйсен опытне парса пыни предприятие ăнăçуллă ĕçлеме май парать.

Çак конкурсра пирĕн район чысне Буинск поселокĕнче ĕçлесе пурăнакан уйрăм предприниматель Рамиль Киямединович Хайбуллин хӳтĕленĕ. Унăн пултарулăхĕнче чăн-чăн наставник паллисем курăнаççĕ, вăл ĕçчен те тимлĕ, ыттисемшĕн ырă тĕслĕхлĕ, çамрăксене хавхалантарса пыракан пуçарулла çын. Хăй пурăнакан тăрăхра ăна пурте хисеплеççĕ, вăл общество пурнăçне хастар хутшăнать, спортпа туслă. Республика конкурсĕнче те унăн кандидатурине ырланă, ăна «Ĕçлекен çамрăксен чи лайăх наставникĕ» ята тивĕçни çинчен пĕлтерсе финалист свидетельствине парса чыс тунă *(ӳкерчĕкре)*.

Р. К. Хайбуллинăн тепĕр çĕнтерĕвне те палăртмалла: ăна «Çамрăк руководитель», «Чи лайăх предприниматель» номинацисенче мала тухнăшăн 1-мĕш степеньлĕ дипломсемпе наградăланă.

# «ВАЖНЫЙ ВОПРОС» ОТВЕЧАЕТ

**Вопрос:** Почему в счет на оплату электроэнергии включаются также и показания общедомовых приборов учета?

Гражданин Никулин.

**Ответ: Постановлением Правительства Российской Федерации от 23 мая 2006 г. N307** установлен порядок предоставления коммунальных услуг гражданам, в котором указано, что при определении размера оплаты за электроэнергию учитываются также и показания общедомовых приборов учета. Расчет стоимости оплаты электроэнергии определяется согласно формуле, указанной в данном постановлении.

**Вопрос:** Какие документы необходимы для оформления детей в приемную семью, и куда мне следует обратиться?

Иванова, г. Чебоксары.

**Ответ: Согласно статье 151 Семейного кодекса Российской Федерации** приемная семья образуется на основании договора о передаче ребенка на воспитание в семью. Для заключения такого договора Вам необходимо обратиться в районную администрацию по месту жительства.

**Передачу «Важный вопрос» также слушайте по будним дням на «Радио России» и радио «Маяк». Ведущий – депутат ЧГСД Евгений Слепов.**

**Письма с вопросами присылайте на адрес газеты «За победу».**

## РАЙОН ХЫПАРĔСЕМ

# ПРЕДСЕДАТЕЛĔН ĔÇЛĔ ÇУЛÇӲРЕВĔ

Çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнче пирĕн районта гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен Чăваш Республикинчи Патшалăх комитечĕн председателĕ Виталий Петьков ĕçлĕ çӳревпе пулнă. Вăл районти дежурнăйсемпе диспетчерсен пĕрлĕхлĕ службин ĕçне мĕнле йĕркеленине тĕрĕсленĕ, унчченхи тĕрĕслевре тупса палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес енĕпе мĕнлерех ĕçленипе тĕплĕн паллашнă, Йĕпреçри 28-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн ĕçĕпе интересленнĕ.

***/ХАМĂР ИНФ./.***

# СТАТИСТИКА МĔН КАЛАТЬ?

Район администрацийĕн ЗАГС пайĕ статистика кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ. Кăçалхи çичĕ уйăхра районта 171 (иртнĕ çул çак тапхăрта 158) ача çуралнă. Вĕсенчен 84-шĕ – арçын ачасем, 87-шĕ – хĕрачасем. Иртнĕ çулхи çак вăхăта арçын ачасем ытларах çуралнă, 86.

Кăçал ку таранччен 277 çын (иртнĕ çул 262) çут тĕнчерен уйрăлнă, çав йышран 127 арçын, ыттисем хĕрарăмсем. Вилнĕ арçынсен вăтам çулĕ – 57, хĕрарăмсен – 73.

Кăçалхи çул çемье çавăракансем ытларах пулнă. Çичĕ уйăхра пĕтĕмпе 105 мăшăра çырăнтарнă, иртнĕ çулхи кăтарту – 83.

Уйрăлакансем те çав-çавах нумай-ха, кăçал ку таранччен 45 çемье (пĕлтĕр – 49) арканнă, уйрăлса кайнă 32 çемьере 18 çула çитмен ачасем пур.

Районта кăçал 2 ачана усрава илнине регистрациленĕ, кун пек тĕслĕх иртнĕ çул пĕрре те пулман.

***/Район администрацийĕн сайтĕнчен/.***

# КОНТРАФАКТЛĂ ТАВАР СУТНĂШĂН

Йĕпреç районĕн прокуратури хамăр тăрăхра суту-илӳ тăвакан павильонсене тĕрĕсленĕ май пĕр уйрăм предприниматель «Ярмăркка» пасарта ют çĕршывран илсе килнĕ «Саф-Момент» ятлă пахалăх паллисĕр çĕпре сутнине тупса палăртнă. Çак тавара экспертиза тĕрĕслевне янă хыççăн, вăл чăнах та контрафактлă пулнине çирĕплетнĕ. Ун çинче тавара хăçан тата ăçта туса кăларнине те палăртман.

Тĕрĕслевре тупса палăртнă факт тăрăх çак тавара суту-илĕве кăларнă сутуçăна Раççей Федерацийĕн КоАПĕн 14.10 статйи тăрăх административлă майпа явап тыттарнă. Вăл ют таварăн знакĕпе саккунсăр усă курнă.

Хальхи вăхăтра ку енĕпе тĕрĕслевсем малалла пыраççĕ.

***А. ЯКУШЕВИЧ,***
***район прокурорĕн помощникĕ.***

# ХУТМАЛЛИ ТАПХĂРА ХАТĔРЛЕНСЕ

«Управляющая компания» муниципалитет предприятийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Йĕпреç поселокĕнчи нумай хваттерлĕ çуртсенчи ăшăтмалли тытăма çуса тата преспа хытарса пĕтернĕ. 68 çуртра арматура питĕркĕчĕсене тĕрĕсленĕ. Ку вăл палăртса хунă пĕтĕм объектсене пĕтĕмпех тĕрĕсленине çирĕплетет. Шкул урамĕнчи 5-мĕш çуртăн (унăн лаптăкĕ 469,9 тăв. м) тата Герцен урамĕнчи 8-мĕш çуртăн (унăн лаптăкĕ 1012,5 тăв. м) тăррисене тĕпрен юсанă. Воин-интернационалистсен урамĕнчи 17-мĕш çурта (унăн лаптăкĕ – 2069,5 тăв. м) юсама тытăнаççĕ. Çынсем пурăнакан 102 çурт валли хĕле хатĕрленсе çитнине çирĕплетекен паспортсем тунă.

***/Район администрацийĕн сайтĕнчен/.***

# БИБЛИОТЕКА ПУЯНЛАНЧĔ

Пирĕн вулакансен ырă ĕçĕсемпе чăнласах мухтанма пулать, вĕсем хăйсен килĕсенчи кĕнекесене библиотекăна яланлăхах килсе параççĕ. Ан тив, ыттисем те тытса вулаччăр вĕсене, килте тусанланса ан выртчăр кăна. Çак шухăшпах Гончаровсен çемйи нумаях пулмасть 77 кĕнеке илсе килсе пачĕ библиотекăна. Вĕсен хушшинче пысăк романсемпе детектив жанрĕпе çырнă кĕнекесем те пур. Дарья Донцова, Анна тата Серж Голонсем, Жульетта Бенцони кĕнекисене тата ытти ют çĕршыв писателĕсен кĕнекисене вулама май туса пачĕç ырă кăмăллă çынсем. Буинск ял тăрăхĕн специалисчĕ Людмила Григорьева та 70е яхăн экземпляр кĕнеке парнелерĕ библиотекăна. Вĕсене буинсксем алран алла çӳретеççĕ, интереслленсех вулаççĕ.

***Н. ПРОХОРОВА,***
***библиотека заведующийĕ.***

## БУИНСК ХЫПАРĔСЕМ

### КĔНЕКЕ ТУСĔСЕМПЕ – ТĔЛПУЛУ

Пĕр вăхăт канса илнĕ хыççăн, Буинскри библиотека вулакансене алăк уçса пачĕ, халĕ кунта каллех халăх йышлăн килсе çӳрет. Кунта килекен кашни çын хăйне майлă расна, анчах вĕсене пĕр интерес çыхăнтарать: вĕсем кĕнеке вулама юратаççĕ тата вĕсем кăмăллă калаçура чунĕсене уçаççĕ. Теприсем вара питĕ сăпайлă тыткалаççĕ хăйсене, вĕсемпе сăмах тупас тесен, раснарах калаçмалла.

Библиотека вара çынсен умне тепĕр тĕнче кăларса тăратать – халиччен пĕлменнине кунта илме пулать. Вулакансенчен эпĕ час-часах ыйтса пĕлетĕп, вăл е ку кĕнекене вуласа тухнă хыççăн мĕнле йĕр юлнă вĕсен шухăшĕнче. Чылайăшĕ хулпуççине сиктерсе кăна илет, хăшĕсем вара вуласа тухнă кĕнеке пирки питĕ нумай вăхăт хушши калаçма хатĕр.

Кĕнеке – пĕлӳ çăлкуçĕ. Ача-пăчасене юмахсен тĕнчи илĕртет. Юмах вуланă хыççăн та ачасенчен ун пирки мĕн шухăшланине ыйтса пĕлме тăрăшмалла. Чĕрĕ калаçу вĕсене питех те кирлĕ.

### КОНКУРС ИРТЕТ

Буинск поселокĕнчи библиотека кĕнеке вулакансем хушшинче конкурс ирттерет. «Пире мĕнпе тĕлĕнтерме пулать?» ятпа иртет вăл. Кашниех хăйĕн кăсăк идейине халăх çине кăларма пултарать. Сăвă калав çырас пултарулăхпа та, хăйне евĕрлĕ кулинари рецепчĕсем шухăшласа кăларассипе те тата ытти таланчĕпе те тĕлĕнтерме пултараççĕ унта хутшăнма кăмăл пуррисем. Чи интереслĕ идейăсене халăх патне çитерекенсене асăнмалăх призсемпе чыслама палăртнă.

***Н. ПРОХОРОВА,***
***библиотека заведующийĕ.***

## ÇУЛ-ЙĔР СТРОИТЕЛЬСТВИ

# ÇУЛСЕМ АЯКРИ ЯЛСЕНЕ ÇЫВĂХЛАТАÇÇĔ

Кăçал ку таранччен Чăваш Енре пĕтĕмпе икĕ миллиард тенкĕлĕх çулйĕр туна. «Чăваш Ен çулĕсем» проекта пурнăçласси активлă пырать, çулсем тума патшалăх уйăрнă укçа-тенкĕне ĕçе кĕртесси пирки нимĕнле иккĕленӳ те çук. Çакăн çинчен нумаях пулмасть Чăваш Республикин хула строительствипе общество инфраструктурин аталанăвĕн министрĕ Александр Гончаров журналистсемпе ирттернĕ пресс-конференцире пĕлтернĕ. Вăл калана тăрăх, çул-йĕр тăвакансем республика правительствин планĕсене вăхăтра пурнăçласа пыраççĕ, вĕсем, палăртнă пекех, икĕ çул хушшинче Чăваш Енри мĕнпур ялсенче хытарнă çулсемпе сыпăнтарса пĕтермелле. Çул-йĕр тăвассине çулталăк хушшинче хывмалли сумма 4,5 миллиард тенкĕпе танлашать. «Чăваш Ен çулĕсем» проекта пĕтĕмпе 9 миллиард тенкĕ укçа хывнă.



Министр пĕлтернĕ тăрăх, паянхи кун республикăра çулсем тăвас ĕçсене 26 подряд организацине тата проект тăвакан 16 организацине явăçтарнă, 190 объектра ĕç шавĕ тăрать. «Çул-йĕр ăстисем, пысăк ĕç пĕлтерĕшне çывăх ăнланса, паха çул хывма май паракан техника ытларах туянаççĕ, хальхи вăхăтри çĕнĕ технологисемпе, оборудованисемпе усă курма тăрăшаççĕ. Вĕсем пысăк калăпăшлă ĕçсем пурнăçлама хатĕр, – тенĕ министр, – хальхи экскаваторсем, асфальт саракан техникăсем пахалăхлă çулсем хывма, кĕске хушăрах пысăк калăпăшлă ĕçсем тума май параççĕ. Кĕреçе тытса алăпа ĕçленипе çул тума хывнă укçана ĕçе кĕртсе пĕтерейĕмĕн».

Çулталăк пуçланнăранпа Чăваш Енре 46,6 çухрăм чухлĕ хытарнă çул туса пĕтернĕ, 22 яла тĕп çулсемпе çыхăнтарнă. Çурла уйăхĕнче кăна республикăри 12 районта çĕнĕ çулсем уçăлнă.

Пирĕн районпа илсен, ЧР Президенчĕ Н. В. Федоров çулсем тăвассине хăвăртлатас енĕпе йышăннă Указа пурнăçласа, пысăк калăпăшлă ĕçсем анлă сарăлнă. Район центрĕнчен аякра вырнаçнă ялсене хытарнă çулсемпе çыхăнтарас ĕçсене виçĕ подряд организацийĕ пурнăçлать. Вĕсем çаксем: «Чăвашавтодорăн» Йĕпреçри çулйĕрпе юсав тата строительство управленийĕ, «Водстроймонтаж» тулли мар яваплăхлă организаци, «Волгогазстрой» хупă акционерлă общество.

«Чăваш Ен çулĕсем» проект шучĕпех иртнĕ çул Тури Кĕлешкассинче асфальт çул хута кайрĕ, 3,1 çухрăма тăсăлакан шанчăклă çул халĕ çак яла Чăваш Тимешпе сыпăнтарать. Кăçалхи çурла уйăхĕнче Костер поселокне Мереçен ялне хытарнă çул туса çитернĕ. Кунти ĕçсене Йĕпреçри çулйĕрпе юсав тата строительство управленийĕ пурнăçланă. Хальхи вăхăтра çул ăстисем «Енĕш – Савкка – Çĕнĕ Кĕлĕмкасси», Анатриял енчен Патăрьелне каякан çулсем çинче тăрăшаççĕ. Березовка тăрăхĕнче те çул тăвасси кал-кал пырать. «Волгогазстрой» хупă акционерлă общество ĕçченĕсем тĕп усадьбăран Калиновка поселокне хытарнă çул хываççĕ, «Водстроймонтаж» тулли мар яваплăхлă общество рабочийĕсем Çиçĕмкассипе Шĕпекеч ялĕсене Пысăк Упакассине çитекен шанчăклă çулпа сыпăнтарма васкаççĕ. Ирçе Çармăс тăрăхĕнче те хĕрӳ ĕçсем пыраççĕ. Чăваш Çармăса каякан çул çинче Йĕпреçри çул-йĕрпе юсав тата строительство управленийĕн ĕçченĕсем вăй хураççĕ.

Çирĕплетнĕ проектпа килĕшӳллĕн, çывăх вăхăтрах Красная Заря, Орел, 11 лет Чувашии, Новая Жизнь, Алшик, Ленино, Спотар, Кушакпуç, Сехнер поселокĕсене, Çĕрпӳелне хытарнă çулсем тума тытăнмалла, Пучинкепе Çирĕклĕ ялĕсене те шанчăклă çулпа çыхăнтармалла. Район бюджечĕн укçитенкипе Хурамалти вăтам шкул патне пыракан çула хытармалла, кунти шкул автобусĕ çаврăнса тухмалли вырăна та асфальт сармалла.

Район администрацийĕн капиталлă строительство тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пайĕн ертсе пыракан специалисчĕ Вячеслав Иванович Моисеев пĕлтернĕ тăрăх, кăçал «Сехнер – Ирçе Çармăс – Липовка» çула юсаса çĕнетнĕ, 2,1 çухрăм чухлĕ хытарнă çул хывнă тата Малиновка поселокĕ тĕлĕнче шкул автобусĕ чарăнмалли площадкăна туса пĕтернĕ. Тарăнвара çитекен çула юсанă, Эконом поселокĕнче те шкул автобусĕ çаврăнса тухмалли площадкăна шанчăклăлатнă.

Çулсем тăвас енĕпе йышăннă программăна пысăк калăпăшлă ĕçсем кĕртсе хăварнă, çав тĕллевсене икĕ çул хушшинче пурнăçламалла. Çак ĕçсене районти тĕрлĕ харпăрлăх формипе ĕçлекен предприятисемпе организацисен руководителĕсем те хутшăнсан тем пекехчĕ, хушма вăй яваплă ĕçсене хăвăртлатма, патшалăх уйăрса панă укçа-тенкĕне вăхăтра ĕçе кĕртме пулăшмалла. Паха çулсем вăрăмланнă май, аякри ялсем çывăхланаççĕ.

***С. БЫКОВА.***

## ЧЕЛОВЕК И ЗАКОН

# ВАШ ПАСПОРТ, ГРАЖДАНИН?

**Довольно часто стали обращаться в территориальный пункт Управления Федеральной миграционной службы России по Чувашской Республике в Ибресинском районе граждане, желающие обменять свой паспорт с истекшим сроком действия (2 и более месяцев).**

На вопрос: почему Вы не обменяли паспорт вовремя? Приходится слышать ответ: паспортом не пользовался, необходимости не было, как получил положил его в шкаф, где он и лежал до сих пор и т.п. А между тем, паспорт - это документ удостоверяющий личность гражданина и принадлежность к гражданству Российской Федерации, который необходимо носить с собой, чтобы избежать некоторых курьезных случаев.

В соответствии с приказом МВД России №1105 от 28.12.2006 года, который четко определил порядок оформления и замены паспорта гражданина Российской Федерации, в случае оформления паспорта в связи с:

♦ достижением 14-летнего возраста
♦ достижением 20-летнего возраста
♦ достижением 45-летнего возраста
♦ изменением гражданином в установленном порядке фамилии, имени, отчества, сведений о дате (число, месяц, год) и (или) месте рождения
♦ изменением пола
♦ непригодности паспорта для дальнейшего использования вследствие износа, повреждения или других причин
♦ изменением внешности
♦ обнаружением неточности или ошибочности произведенных в паспорте записей

**Срок сдачи всех необходимых документов - 30 дней с момента наступления указанных выше оснований.**

В случае хищения паспорта гражданин должен обратиться в орган внутренних дел с заявлением о хищении паспорта, где его заявление обязаны принять в соответствии с Приказом МВД РФ №985 от 01.12.2005 г. и выдать талон-уведомление о регистрации сообщения о происшествии. Только при наличии данного талона - уведомления гражданин может обратиться в территориальный пункт УФМС России по Чувашской Республике в Ибресинском районе для восстановления паспорта.

Приказом МВД РФ № 1105 от 28.12.2006 г. также определен режим работы подразделений Федеральной миграционной службы. Доводим до Вашего сведения, что для получения либо обмена паспорта на территории Ибресинского района Вы можете обратиться в территориальный пункт УФМС России по Чувашской Республике в Ибресинском районе, который осуществляет прием граждан по следующему графику: **понедельник, среда, пятница- с 14.00 до 20.00 часов, вторник, четверг - с 10.00 до 15.00, суббота - с 10.00 до 14.00.**

Выходные дни устанавливаются в режиме чередования через неделю по графику: суббота, воскресенье и воскресенье, понедельник. Уточнить информацию можно по телефону 2-11-33.

Уважаемые граждане, обязанность иметь и бережно хранить документ, удостоверяющий личность, т. е. паспорт, полностью лежит на Вас. Отсутствие необходимости в его пользовании не означает, что Вы не должны следить за его состоянием или сроком действия, а наоборот бездействие, повлекшее за собой просрочку паспорта, влечет привлечение гражданина к административной ответственности с наложением административного наказания в виде штрафа в размере от 1500 до 2500 рублей.

***О. СМИРНОВА,***
***начальник территориального пункта УФМС России по Чувашской Республике в Ибресинском районе.***




## САЛАМЛАТПĂР

Ытарайми çут тĕнче пилленĕ хаклă та юратнă аттене, кĕрӳшне хăйĕн ывăлĕ пекех йышăнакан хуньăма, мăнукĕсемшĕн тем тума та хатĕр кукаçине – Вăтаелĕнче пурăнакан, хăй вăхăтĕнче Калинин ячĕллĕ колхозра механизаторта тăрăшнă **Петр Александрович КАЗАКОВА** çак кунсенче паллă тăвакан юбилейпа – çуралнăранпа 60 çул çитнĕ ятпа хĕрӳллĕн те çепĕççĕн тата кăмăл тараватлăхĕпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телейырлăх, ял-йышра, кил-йышра чыс-хисеплĕ, ырă ятлă пулма ăнăçусем сунатпăр.

Тулăх кĕркунне кĕрекинче
Эсĕ тивĕçлĕ паян лармашкăн,
Хăвăн çывăх тус-тăвансенчен
Ăшă сăмахсем илсе тăмашкăн.
Систермесĕр çитрĕн утмăла.
Санăн малалла та утмалла.

***ХĔРĔ, КĔРӲШĔ, МĂНУКĔСЕМ.***

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

дорогого сына, брата, дядю, отца, дедушку – **УТКИНА Владимира Геннадьевича,** проживающего в п. Ибреси, с замечательным днем – 45-летием.

Очень сильный и умелый,
Энергичный, добрый, смелый.
Не страшны печаль и горе –
Нам любовь твоя опора.
Ты единственный на свете!
Пусть тебе удача светит,
Будь здоров и полон сил
И судьбе, как нам, будь мил!

***МАТЬ, БРАТ, СЕСТРЫ И ЗЯТЬЯ, СНОХИ, ПЛЕМЯННИКИ, ДОЧЕРИ: ВЕРА, ВИКА, ЗЯТЬ СЕРГЕЙ, ВНУЧКА ЖЕНЯ, СВАТЬЯ АЛЕКСАНДРОВЫ, УРАЗАЕВЫ.***

ЮБИЛЕЙ

# ĂСТАЛĂХ САППАСĔ ИКСĔЛМИ

**Нумай кĕнеке авторĕ, паллă çыравçă, публицист, сатирик, юморист Владимир Прокопьевич Кузьмин хăйĕн 70 çулхи юбилейне пултарулăхĕ вăйлăн аталаннă тапхăрта кĕтсе илет. Çыру сĕтелĕ хушшинче кăна пусăрăнса лармасть вăл. Владимир Кузьмин ăçта çыравçăпа çын пулăшăвĕ тата таланчĕ кирлĕ, çавăнта васкать. Вăл, Шупашкарта йĕркеленнĕ Вăрнарпа Йĕпреç ентешлĕхĕсен чи хастар та пуçарулла çынни пулнă май, çак икĕ тăрăхра çуралса ӳснĕ паллă ентешсен ĕçĕ-хĕлĕпе, пурнă-çĕпе паллаштаракан хайлавсем çырать, вĕсене кулленех тухса тăракан хаçатсенче кун çути кăтартать.**



Çыравçă хăйне: «Эпĕ икĕ район ывăлĕ», – тет. Тивĕçлипех. Çураласса Вăрнар районĕнчи Хурăнсур Çармăс ялĕнче çуралнă, унăн çамрăклăхĕпе ăсталăхĕ вăй илсе аталаннă çулĕсем ытарайми вăрманлă-юханшывлă Йĕпреç тăрăхĕнче иртнĕ. Автор хăйĕн хайлавĕсенче халăх кун-çулĕ, тăван кĕтес, çынна вăй-хăват парса тăракан пархатарлă ĕç çинчен лăпкăн, хыпăнмасăр сăмах хускатать. Çĕр-аннепе ун чĕрçи çинче пысăк шанăçпа çирĕппĕн тăракан сухаçă хушшинчи çыхăнусене çырса кăтартнă чухне унăн пултарулăхĕ уйрăмах çӳллĕ шая çĕкленсе çитет. Çыравçă тупнă, ăнăçлă пулса тухнă сăнарсемшĕн эпĕ те унпа пĕрлех савăнатăп, таса та çутă шухăшлă йĕркисенчен «çуралакан» ырăлăх, ĕненӳпе шанăç тата юрату туйăмĕсемпе пуянланнă хыççăн ху та кĕнекери геройсемпе пĕрле тĕркĕшӳллĕ-вĕркĕшӳллĕ пурнăçра çĕнĕ утăмсем тăвас тĕллевпе хавхаланатăн. Çыннăн кăмăл-сипечĕн пахалăхĕсене туллин уçса пама тăрăшать çыравçă. Унăн хайлавĕсен пĕр уйрăмлăхĕ çинче пăртак чарăнса тăрам-ха. Кĕнекесенче сăнарланнă персонажсене вĕсем хăйсене тӳсме тивнĕ мĕн пур йывăрлăх-чăрмавсене хăюллăн парăнтарса кун-çул киммине малалла тӳсĕмлĕн илсе пыма чăтăм çитернĕ хыççăн пушшех те юратма пуçлатăн. Вĕсем айванлăхпа мĕскĕнлĕх чатăрĕ айне пулнă çынсем мар иккен.

Тĕлĕнетĕп: çичĕ хут тар кăларса, çанă тавăрса ĕçлеме ăçтан вăй тупатьха Владимир Кузьмин? Пĕр кĕнеке хыççăн тепĕрне кăларса пырать вăл. Уншăн издательство чăрмав хӳми мар, алă тăсса паракан ыркăмăллăх çурчĕ пек кăна туйăнать пулас. Пĕлтĕрпе кăçал кăна вăл тĕрлĕ издательствăра 5 кĕнекине пурнăç пачĕ. Вулакансем кăмăлласа, хапăлласа йышăнчĕç вĕсене. «Илем çăлтăрĕсем» те, «Тамăк хуранне вăрлани» те – пĕрре ларса, малтан пуçласа вĕçне çитмесĕр те алăран яма çук кĕнекесем. Чăвашла çырнă хушăрах вырăс вулаканне те асрах тытать вăл. Кăçал вăл вырăсла çырнă «Взлет» тата «Под радугой дружбы и любви» кĕнекесем ăсталарĕ. Малтанхи кăткăс саманара та ертӳçĕ пултарулăхĕпе талантне туллин кăтартакан паянхи вăхăт паттăрĕ çинчен, тепри чăвашпа украин халăхĕсен хушшинчи çирĕп çыхăнусемпе туслăх, икĕ халăх çамрăкĕсен ĕмĕрхи юратăвĕ çинчен. «Ман пурнăç – мăн пурнăç» тесе ят панă хăйĕн тепĕр кĕнекине юбиляр. Хăй ку таранччен литературăра, журналистикăра мĕнле утăмсем туни тĕкĕр çинчи пекех уççăн курăнса тăрать çав кĕнекере.

Владимир Кузьмин кĕнекисем тăван литература çӳлĕкĕ çинче сумлă вырăнта тăма тивĕçлĕ. Халăх пурнăçне, йăли-йĕркине лайăх пĕлет вăл, паха касă çыракан ăста сухаçă пекех, писатель калемĕ тарăн «кастарать». Тăван литературăна хăйĕн хайлавĕсемпе самаях пуянлатрĕ ырма-канма пĕлмесĕр ĕçлекен автор. Пушă, ним çук çĕрте сасă паман унăн таланчĕ. Çăл куç шывĕ юхан шывсене вăй парса тăнă пекех, Владимир Кузьмин та çак тарана çитиччен ăсталанă тĕрлĕ жанрлă хайлавĕсемпе чăваш литературин уйĕнче хăй ятĕнчен капмар капан çĕклерĕ. Эпĕ кунта вăл çырнă кĕнекесем çинчен кĕскен те пулин чарăнса тăманшăн каçартăр мана вулакан. Вĕсемсĕр пуçне çак хушамата эпир литература-публицистика статйисен, фельетонсемпе эссесен, памфлетсемпе юморескăсен айĕнче час-часах курма хăнăхса çитрĕмĕр мар-и? Вĕсенче – çыравçă шухăшлавĕ, савăнăç-пăшăрханăвĕ, çĕр-аннемĕре юратни, уншăн тунсăхлани, ăна хӳтĕлесе хăйĕн сассине пани, яш-кĕрĕмĕн таса, илĕртӳллĕ юратăвĕ. Ĕçлекен çын тĕп вырăнта. Тĕрĕслĕх, пурнăçа юратаслăх туртăмĕпе тулнă унăн кĕнекисем. Анчах та пур чухне те мухтав юрри юрланипе кăна йăпанса лармасть çивĕч чĕлхеллĕ çыравçă. Вăл паянхи пурнăç çине чăркăш кăмăлпа, тиркевлĕ куçпа пăхса, умри çитменлĕх-кăлтăксене шелсĕррĕн питлеме еплерех сăмахсем тупать! Хальхи яш-кĕрĕм шăпи, «наркăмăш шурлăхĕ» сарăлсах-тарăнлансах пыни шухăшлаттармасăр тăма пултараймасть сатирика. Юбиляр тĕрлĕпĕр ăçтиçуксене – ханттарсемпе харампырсене, çăмăл майпа мул-пурлăх пуçтаракансене, донжуансене, чыслăхне сутассине нимĕн вырăнне те хуман çурмаккайсене хĕрӳллĕн те витĕмлĕн питлет. Унăн чылай хайлавĕнче юратупа курайманлăх туйăмĕсем вырăн тупнă. Кăткăс сюжетсем çыхма ăста пĕлекен авторăн геройĕсем çемье чысĕшĕн, ялăн ыранхи кунĕшĕн «пуш параппан çапса» мар, хăйсен тӳрĕлĕхĕпе, ĕçченлĕхĕпе, ырă кăмăлĕпе çине тăрса кĕрешеççĕ. Автор ырăпа усал, тӳрĕлĕхпе ултав-суя хушшинчи кĕрешĕве тĕрĕс çутатса парать.

Аллине калем тытиччен Владимир Кузьмин пурнăç «хуранĕнче» самаях пиçĕхнĕ: киномеханикрен тытăнса комсомол пуçлăхĕ те, районсенче тухса тăракан хаçатсен журналисчĕ те пулнă. Редакторăн çăмăл мар ĕçне пурнăçланă. Çуллансан, ăсталăхĕ тивĕçлĕ шая çитсен тин Писательсен союзĕн членне кĕнĕ. Çамрăк ăрушăн тăрăшассине хăйĕн ĕçĕнче тĕп вырăна хурать вăл, шанăç паракан яш-кĕрĕмсен пултарулăхне асăрхаса, ăна ӳсме пулăшать. Журналсенче, хаçатсенче пиçĕхсе пухнă опычĕ ăна паян кунччченех пысăк калăплă хайлавсем çырма материал парса тăрать. Вăл кĕнекисен геройĕсем пулма хăй лайăх пĕлекен çынсенех суйласа илнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар.

Владимир Кузьмин çĕнĕрен çĕнĕ кĕнекесем «калăпласса» шанса тăратпăр эпир. Сăпасра çуралнăскерĕн, ăсталăх саппасĕ иксĕлмест-ха. 15 повеçпе 3 роман авторĕн пултарулăхĕ хăй çуралса ӳснĕ Хурăнсур Çармăсри тарăн çырмара тапса тăракан çăлкуçĕпе пĕр танах.

Юбилей ячĕпе сире, хаклă Владимир Прокопьевич!

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

## СĂМАХКАÇМĂШ




**СУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Лашана ...па мар, сĕлĕпе хăвалаççĕ (ват. сăм.). 3. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ял. 8. Кану вырăнĕ. 13. Хурăнташ, тăван. 14. Пуçа хыçтаракан пулăм. 15. Пушар вышки. 19. Çыхăну çынни. 20. Шыври чĕрчун. 21. «... на Волге» – И. Репин картини. 22. Культура учрежденийĕ. 24. Вырăсла – упражнение, чăвашла – ... 25. Çамрăк, хитре хĕр. 29. Чăвашсен паллă сăвăçĕн хушма хушамачĕ, чăн хушамачĕ – Трофимов. 30. Асамат кĕперĕ. 31. Хĕрача ячĕ. 32. Çывăх тăван. 33. Утă хумалли вырăн. 34. Вырăссен паллă çыравçи. 35. Шуйттан, усал. 36. Раççей космонавт-летчикĕ. 40. Организмра пухăнакан сиенлĕ япала. 45. Чили çĕршывĕнчи пысăк пушхир. 47. Пĕр-пĕринпе туслăн тупăшни. 48. Çулталăка пуçлакан уйăх. 49. Историе кĕрсе юлнă ят, Ярославль хулин никĕслевçи. 53. Пушăтран тунă савăт. 54. Чăваш Республикинчи район центрĕ. 55. Вăрманти кайăк. 56. Вăйпах мăшăр тупса пани. 57. Утăм.

**ÇӲЛТЕН АЯЛАЛЛА:** 1. Вут-кăвара хирĕç кĕрешекен. 2. Ăс-тăна аталантарма пулăшакан вăйă. 4. Велосипедистăн çулĕ. 5. Тĕнчери чи вăйлă футбол командисенчен пĕри. 6. Чăваш календарĕнчи уйăх. 7. Йĕпе-... 9. Хăй йӳçĕ, анчах сиплĕ эмел парать. 10. «Шăнкăлт!» уçăлмасть çав ..., тусăм пулнă тахçанах инке (сăвăран). 11. Вырăссен паллă музыка критикĕ. 12. Армени ту та, футбол команди те. 16. Египетри ГЭС. 17. Арçын пурнăçĕ. 18. Александр Васильев Çемен Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэми тăрăх çырнă опера. 23. Мускав университечĕ ун ячĕпе хисепленет. 26. Ӳсентăран клеткисен хуппи. 27. Тĕп телекуравра Михаил Леонтьев ертсе пыракан «Однако» передачăн чăвашла ячĕ. 28. Чăвашсен хĕрарăм-çыравçи. 35. Çулталăкра пĕрре халăха йышлăн пуçтаракан пасар. 37. Волгоградри футбол команди. 38. Çутă е ăшă пайăркисем пĕр çĕре пухăнакан точка та, чеелĕх те. 39. Нимĕç хĕрарăмĕ. 41. Карчăк, карчăк, ..., карта урлă каçаймасть. (Петĕр Хусанкай). 42. Вăрçă çулĕсенче анлăн сарăлнă юрă та, хĕрача ячĕ те. 43. Ял хапхи те, Чăвашрадио передачи те. 44. Килте усракан чĕрчун. 46. Сăнарлă искусство тĕсĕ. 49. Чăваш Республикинче тухса тăракан литература журналĕ. 50. Сăр. 51. Венгерсен паллă композиторĕ. 52. Çил вĕртермелли, шăна-пăвана хăваламалли хатĕр.

### ХАÇАТĂН 64-МĔШ НОМЕРĔНЧЕ ПИЧЕТЛЕННĔ СĂМАХКАÇМĂШ ТУПСĂМĔСЕМ

**СУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Хури. 3. Диктатура. 8. Танк. 13. Клише. 14. Стена. 15. Метрика. 19. Ĕнтрĕк. 20. Иванов. 21. Станина. 22. Нăрă. 24. Куштанлăх. 25. Роба. 29. Аслан. 30. Хăлха. 31. Янкай. 32. Атлас. 33. «Улине». 34. Илеть. 35. Ухик. 36. Сумароков. 40. Сăрт. 45. «Сникерс». 47. Аслати. 48. Аляска. 49. Арктика. 53. Курак. 54. Ливер. 55. Мира. 56. Балалайка. 57. Анис.

**ÇӲЛТЕН АЯЛАЛЛА:** 1. Хĕрлĕхен. 2. Ракета. 4. Илем. 5. Торт. 6. Тани. 7. Раса. 9. Асанне. 10. «Калевала». 11. Килĕшӳ. 12. Кервен. 16. Ентеш. 17. Рента. 18. Канал. 23. Ăмсанулăх. 26. Бухгалтер. 27. Снайпер. 28. Ахваниç. 35. Урбанизм. 37. Манер. 38. Рэкет. 39. Карăк. 41. Тăрантас. 42. Шатура. 43. Кăлава. 44. Алакĕр. 46. Ястран. 49. Акка. 50. Кура. 51. Инза. 52. Алăк.

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

Дорогую, уважаемую коллегу, лучшую воспитательницу детского сада «Рябинка», вторую маму наших детей – **ЗАХАРОВУ Надежду Ильиничну** – горячо и сердечно поздравляем с круглой датой – 50-летием со дня рождения.

Для нас загадка – Ваши годы:
Всегда Вы чудно хороши.
Желаем в жизни все невзгоды
Сметать усилием души.
Как прежде, бережно храните
В душе прекрасные черты,
Как раньше, щедро всем дарите
Огонь душевной красоты.

***Коллектив работников детсада, родители, ее юные воспитанники.***

## РЕЗУЛЬТАТЫ АУКЦИОНА

Комиссия администрации Ибресинского района по пр
дению аукциона, по продаже легковой автомашины- УАЗ 3
сообщает результаты аукциона, проведенного 25 июля
года.

| № п/п | Наименование | Количество участников | Цена сделки (руб.) | Победи аукцио |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Автомашина УАЗ 31519, год выпуска 2004. | 2 | 135600 | Иванов |

АНОНС

## СОСТОИТСЯ ТУРНИР

19 августа на стадионе «Спартак» поселка Ибреси состоится турнир по мини-футболу, посвященный Дню п. Буинск. Приглашаются все желающие команды принять участие в турнире. Начало в 10 часов.

***ОРГКОМИТЕТ.***

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*За главного редактора* **БЫКОВА С. В.**

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3274: чув. – 2422, русск. – 852. Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓡ

Срок сдачи в печать — 17.00

Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Евграфова Р. А.